ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
САККУНЕ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ПУШАР ХĂРУШСĂРЛĂХЕ ÇИНЧЕН" САККУНЕН 3 ТАТА 8[1] СТАТЙИСЕНЕ УЛШĂНУСЕМ КЕРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи утă уйăхĕн 6-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинче пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен" 2005 çулхи чӗк уйăхĕн 25-мĕшĕнчи 47 №-лĕ саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 65 №; 2007, 73 №; 2008, 75 №; 2009, 81 №; 2011, 90 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 7 №; "Республика" хаçат, 2015, раштав уйăхĕн 10-мĕшĕ; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2016, 3 №; "Республика" хаçат, 2021, утă уйăхĕн 1-мĕшĕ; 2022, утă уйăхĕн 13-мĕшĕ, чӗк уйăхĕн 16-мĕшĕ) çакăн пек улшăнусем кĕртес:

1) 3 статьян 2-мĕш пайĕнче:

а) вун тăххăрмĕш абзаца ", çавăн пекех ачасен канăвне йĕркелекен тата сывлăхне çирĕплетекен организацисен территорийĕсен, сад ĕрчетмелли е пахча çимĕç çитĕнтермелли территорисен – çав территорисенче вăрман пушарĕсем тухма пултараççĕ – переченьне çирĕплетет" сăмахсем хушса хурас;

ă) çакăн пек çырса çирĕммĕш çĕнĕ абзац хушса хурас:

"пушар тухакан сезон пуçламăшне палăртать;";

б) çирĕммĕш тата çирĕм пĕрремĕш абзацсене тивĕçлĕн çирĕм пĕрремĕш тата çирĕм иккĕмĕш абзацсем тесе шутлас;

2) 8^1 статьян 2-мĕш пайĕн улттăмĕш абзацне "халăха пĕлтерессине" сăмахсем хыççăн ", çав шутра массăллă информаци хатĕрĕсем урлă," сăмахсем хушса хурас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ – О.Николаев

Шупашкар хулли
2023 çулхи-çурла уйăхĕн 7-мĕшĕ
56 №